Книжная палата

27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 МАРТ 10 ШАМАТКУН 46(6797) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Белоруссири 2-мĕш фронт çарĕсен командующине
Совет Союзĕн Маршалне РОКОССОВСКИЙ
Фронт штабĕн начальникне
Генерал-полковника БОГОЛЮБОВА

БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронт çарĕсем наступление вăйлатса пырса, ШТОЛЬП хулине—чугун çулсемпе шоссе çулĕсен паха узелне тата нимĕçсен çурçĕр Померанири оборонин хăватлăн тĕреклетнĕ пунктне туртса илнĕ.

ШТОЛЬП хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче çаксем чапа тухнă: РОМАНОВСКИЙ генерал-лейтенантăн, ЛЯПИН генерал-лейтенантăн, МИКУЛЬСКИЙ генерал-лейтенантăн, КОРОТКОВ генерал-майорăн, ХУДАЛОВ генерал-майорăн, ТРЕБЕНКИН полковникăн, ХРАМЦОВ полковникăн, ПОЛУВЕШКИН полковникăн, КОРШУНОВ полковникăн, АСАФЬЕВ полковникăн çарĕсем; артиллери генерал-майорĕн БЕЗРУКАН, артиллери генерал-майорĕн ЛИХАЧЕВАН, артиллери генерал-майорĕн КОЗНОВАН, ЗАХАРОВ полковникăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн ПАНФИЛОВАН, АБРОКОВ полковникăн, УРВАНОВ полковникăн, ЕГОРОВ подполковникăн, КУЦ подполковникăн, РЯЗАНЦЕВ подполковникăн, БАЛЫКОВ подполковникăн, ХАРИТОНОВ полковникăн, НЕМКОВИЧ подполковникăн, ПОТАПОВ майорăн танкисчĕсем; авиаци генерал-лейтенанчĕн БАЙДУКОВАН, авиаци генерал-майорĕн БОРИСЕНКАН, авиаци генерал-майорĕн ФЕДОРОВАН, ГРИЩЕНКО полковникăн, РЫБАКОВ полковникăн, ПОКАЕВОЙ полковникăн, КАЗАЧЕНКО подполковникăн, БАРДЕЕВ подполковникăн летчикĕсем; ВИНОГОР полковникăн, ПОЛОВНЕВ инженер-полковникăн, КЛЕМЕНТЬЕВ полковникăн, ДУБРАВИН подполковникăн саперĕсем; СЫЧЕВ полковникăн, ПОКРАС подполковникăн, ГРАДЕЦКИЙ майорăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, ШТОЛЬП хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, мартăн 9-мĕшĕнче, 21 сехетре, пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, икçĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, Белоруссири 2-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, ШТОЛЬП хулине туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, ШТОЛЬП хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТАВАТАП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1945 çулхи мартăн 9-мĕшĕ. № 297.

Совет Информаци Бюровĕнчен

МАРТĂН 7-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронт çарĕсем мартăн 7-мĕшĕнче ГНЕВ (МЕВЕ) хулине СТАРОГАРД (ПРЕЙСИШ СТАРГАРД) хулине—нимĕçсен ДАНЦИГ хулине пырса кĕмелли çулсем çинчи оборонин тĕреклетнĕ паха пункчĕсене—туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 200 пункта ытла çапăçса йышăннă, вăл шутра—ЗААБЕН, ПИНШИН, ГОХ, ШТЮБЛЯУ, КОШМИН, ПОГУТКЕН, ЛИНЕВО, ОЛЬПУХ, ДЗИМЯНЕН, ЗОММИН, РЕКОВ, ЛУББЕН, ТРЕБЛИН, БАРТИН, ПОЛЛОРЮК, АЛЬТ-БЕВЕРСДОРФ, АЛЬТ-ШЛАВИН, ДАМСХАГЕН, НОЙВАССЕР ятлă пысăк ялсем.

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, малалла наступлени туса пырса, мартăн 7-мĕшĕнче ГОЛЛНОВ, ШТЕПЕНИТЦ тата МАССОВ хулисене—нимĕçсен ШТЕТТИН хулине пырса кĕмелли çулсем çинчи оборонин тĕреклетнĕ паха пункчĕсене—штурмласа туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 50 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—ВАЛЬДДИВЕНОВ, ФРИТЦОВ, ЯССОВ, ЛААТЦИГ, ЗАГЕР, ПАУЛЬСДОРФ, ШЮТЦЕНДОРФ, АМАЛИЕНХОФ ятлă пысăк ялсем.

Фронт çарĕсем ШИФФЕЛЬБАЙН хулинчен кăнтăртарахра çавăрса илнĕ тăшман группировкине пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă. Малтанлăха палăртнă тăрăх, ку районра 8.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ тата хĕçпăшалпа çар пурлăхĕ нумай тытса илнĕ. Нимĕçсен 10-мĕш армейски корпус командирĕ Краппе генерал-лейтенант хăйĕн штабĕпе пĕрле тыткăна лекнĕ.

УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронт çарĕсем, Карпат тăвĕсен тăрăхĕнче сăртлă-вăрманлă вырăнти йывăр условисенче тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, мартăн 7-мĕшĕнче Чехословаки çĕрĕнче БАНСКА ШТЯВНИЦА хулине—нимĕçсен оборонин вăйлă тĕреклетнĕ пунктне—туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, САСА, БАБИНА, КОЛПАХИ, ГОДРУША, ЗВОЗДНИЦА ялĕсене йышăннă.

Венгрире, БАЛАТОН кӳллинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тата кăнтăртарахра, пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсен атакисене сире-сире янă.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ тата чылай пунктра тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Мартăн 6-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 140 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 29 самолетне персе ӳкернĕ.

МАРТĂН 8-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронт çарĕсем, малалла наступлени туса пырса, мартăн 8-мĕшĕнче БЫТУВ (БЮТОВ) хулине КОСЬЦЕЖИНА (БЕРЕНТ) хулине — чугун çулсемпе шоссе çулĕсен паха узелĕсене тата нимĕçсен Данциг хулине пырса кĕмелли çулсем çинчи оборонин вăйлă тĕреклетнĕ пункчĕсене—туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 300 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—АДЛИХ, ЛИБЕНАУ, ПЕРПЛИН, РАЙКАУ, СВАРОШИН, ШАДРАУ, МАЙСТЕРСВАЛЬДЕ, ШТАНГЕНВАЛЬДЕ, ЭГГЕРТСХЮТТЕ, ГРАБУВКО, КАЛИСКА, КОРНЕН, НАКЕЛЬ, БОРНТУХЕН, АЛЬТ-КОЛЬЦИГЛОВ, КЛАЙН-ГАНЗЕН, ГРОСС ГАНЗЕН, КЛАЙН ЗИЛЬКОВ, КВАКЕНБУРГ, ФРАНЦЕН ятлă пысăк ялсем. Мартăн 7-мĕшĕнче фронт çарĕсем 2.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

ШТЕТТИН хули енче, ШТАРГАРД хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем ОДЕР шывĕн хĕвелтухăç хĕррине тăшмантан тасатасшăн çапăçнă, халăх пурăнакан 60 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра—ЛЮБЬЦИН, ХРИСТИНЕНБЕРГ, АВГУСТВАЛЬДЕ, БАРЕНБРУХ, КУБЛАНК, РЕКОВ, КОЛОВ, ЗИНЦЛОВ, БРЕМЕРХАЙД ятлă пысăк ялсем.

Мартăн 7-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем 3.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

Венгрире, БАЛАТОН кӳллинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тата кăнтăртарахра, пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсен атакисене сире-сире янă.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ тата чылай пунктра тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Мартăн 7-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 116 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 39 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Белоруссири 2-мĕш фронт çарĕсем ăнăçлă наступление вăйлатса пынă. Совет пехотинецĕсем, танксемпе артиллери пулăшнипе, Косьцежина (Берент) хулине—нимĕçсен Данциг хулине пырса кĕмелли çулсем çинчи оборонин вăйлă тĕреклетнĕ пунктне—атакăланă. Пирĕн боецсем хулана вăркăнса кĕрсе кайнă та урамсенче хаяррăн çапăçнă хыççăн Косьцежина хулине йышăннă. Çавăн пекех тата Бытув (Бютов) хулине пырса кĕмелли çулсем çинче те вăйлă çапăçусем пулса иртнĕ. Бытув хули Хĕвелтухăç Померанири çулйĕрсен паха узелĕ пулса тăрать. Бытув хули патне виçĕ чугун çул тата темиçе шоссе çулĕ пырса тухаççĕ. Бытув хулине хăйсен аллинче тытса тăрса, нимĕçсем хăйсен çарĕсене ăçта кирлĕ унта хăвăрт куçарма пултарнă. Хула патне пырса тухнă пĕр соединенин боецĕсем тăшманăн умлă хыçлăн тунă вунă контратакине сирсе янă. Çав хушăра пирĕн çăмăллăн куçса çӳрекен чаçсем тăшмантан аякран иртсе кайнă та нимĕçсене çурçĕр-хĕвеланăç енчен пырса çапнă. Хаяррăн çапăçса, нимĕçсем хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă. Çĕмĕрсе тăкнă тăшман гарнизонĕн юлашкийĕсем пĕр йĕркесĕр каялла чакнă.

Фронт çарĕсем, вăрмансенчи пысăк йывăç куписем урлă тата мина хирĕсем урлă каçа-каçа, кӳлĕсем хушшинче туса лартнă тăшман оборонине çĕмĕре-çĕмĕре, 20 километр малалла кайнă. Штангенвальде ялĕ районĕнче нимĕçсем контратакăна хăйсен танкĕсене кĕртсе янă. Пирĕн танкистсем тăшманăн 13 танкне пĕтерсе тăкнă та Данциг хулинчен 20 километр кăнтăр-хĕвеланăçнерехре ларакан Штангенвальде ялĕнчен нимĕçсене сирпĕтсе кăларнă. Кун каçиччен пирĕн çарсем 3.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла вĕлерсе пĕтернĕ. Тăшманăн 42 танкĕпе хăй тĕллĕн çӳрекен туппине пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсенчен 6 самолет, çар пурлăхĕ тиенĕ 3 чугун çул эшелонне тата хĕçпăшал нумай тытса илнĕ. Нимĕçсен «Герман Геринг» ятлă запасри бригадин командирне Майер полковника унăн штабĕпе пĕрлех тыткăна илнĕ.

* * *

Штеттин хули енче пирĕн çарсем çапăçса наступлени туса пынă. Альтдамм хули патнелле пыракан шоссе çулĕсемпе чугун çулсем тăрăх малалла куçса пырса, совет танкĕсемпе пехоти нимĕçсене чылай ялтан сирпĕтсе кăларнă. Халĕ пирĕн çарсем тăшманпа Альтдамм хулинчен 5 километр хĕвелтухăçнерехре хаяррăн çапăçаççĕ. Штеттин хулине хĕвелтухăç енчен хӳтĕлесе тăракан Альтдамм хулине нимĕçсем хăйсен аллинче тытса тăма тăрăшаççĕ. Мадю-Зее кӳллипе Одер шывĕ хушшипе çурçĕр еннелле наступлени туса пыракан совет çарĕсем 15 километр малалла кайнă. Тăшмантан вăйлă çирĕплетнĕ пунктсем пулса тăракан чылай яла туртса илнĕ. Пирĕн çарсем пыра-пыра çапнипе каялла чакакан тăшман çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем тӳсет. Тулли мар даннăйсем тăрăх, нимĕçсенчен хăй тĕллĕн çӳрекен 5 тупă, 74 хир туппи, 100 миномет ытла, 300 пулемет тата ытти трофейсем те тытса илнĕ.

Пирĕн çарсем ĕнер туртса илнĕ Штепенитц хулинче 23 паровоз, 500 чугун çул вагонĕпе цистерна ытла, баржа туртса пыракан пароход, боеприпас, апат-çимĕç тата çар япалисен темиçе складне тытса илнĕ.

* * *

Венгрире, Балатон кӳллинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тата кăнтăртарахра, тăшман тул çутăла пуçласанах атакăлама пуçланă. Нимĕçсем пехотăпа танксен пысăк вăйĕсене пĕр ансăр участокра çапăçăва кĕртсе янă. Совет чаçĕсем, пур тĕрлĕ хĕçпăшалпа та вăйлăн персе тăрса, гитлеровецсен атакисене сире-сире яраççĕ. Хаяр çапăçура 2.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн 26 бронетранспортерне тата 48 танкĕпе хăй тĕллĕн çӳрекен туппине çунтарса янă, е персе çĕмĕрнĕ, вĕсенчен хăшĕсем минăсем çине лексе сирпĕнсе кайнă.

Тăшман атакисене сирсе янă чухне совет боецĕсем, сержанчĕсем тата офицерĕсем çав тери паттăррăн çапăçаççĕ. Нанешев сержант ертсе пыракан тупă расчечĕ пĕр çапăçура нимĕçсен виçĕ танкне персе çĕмĕрнĕ. Бронебойщиксем Воронинпа Емельянов автоматчиксен ушкăнĕпе пĕрле тăшман пехотин пĕр взводне пĕтерсе тăкнă тата нимĕçсен хăй тĕллĕн çӳрекен туппине çунтарса янă. Басаранов пулеметчик 13 нимĕçе вĕлерсе тăкнă. Кропачев лейтенант командир пулса ертсе пыракан пулеметчиксен взводне нимĕçсен икĕ танкĕ атакăланă. Кропачев лейтенант танксене çĕмĕрмелли гранатăсем вăркăнтарнă та нимĕçсен пĕр танкне персе çĕмĕрнĕ. Тепĕр танкĕ çине пулеметчиксем çунтаракан шĕвек тултарнă бутылкăсем вăркăнтарнă. Нимĕçсен танкĕ çунса кайнă. Василенко сапер лартнă минăсем çине пырса кĕрсе, нимĕçсен виççĕмĕш танкĕ сирпĕнсе кайнă.

*

Балтика тинĕсĕнче пирĕн карапсем тăшманăн 4.000 тонна таякан судне шыва путарнă.

Подсобнăй хуçалăхсемпе коллективлă пахчасене çуракине кăтартуллăн хатĕрлер

Иртнĕ çулта пирĕн республикăри предприятисемпе учрежденисен подсобнăй хуçалăхĕсене малалла аталантарса пырас тата çĕнĕрен организацилес тĕлĕшпе чылай ĕçсем тунă. Хальхи вăхăтра республикăри фабрикăсемпе заводсем çумĕнче 43 подсобнăй хуçалăх шутланать, вĕсенчен 17-шĕ республикăри промышленность наркомачĕсене пăхăнса тăраççĕ. Подсобнăй хуçалăхсем усракан выльăх-чĕрлĕх йышĕ, акакан çĕр лаптăкĕ çулран çул ӳссе пырать. 1940 çулта подсобнăй хуçалăхсем акнă çĕр лаптăкĕ 2.000 гектар ытларах пулнă пулсан, 1944 çулта 7.800 гектара çити ӳснĕ. Çавăн чухлĕ çĕр лаптăкĕ çинчен сахал мар тырпул, пахча-çимĕç, выльăх апачĕ туса илнĕ. Çакă вăл, паллах, ĕççынисен апат-çимĕç хисепне ӳстерме пулăшнă.

Хуçалăх руководителĕсем, парти, совет тата профсоюз организацийĕсем умĕнче кăçалхи çул подсобнăй хуçалăхсене, çавăн пекех коллективлă тата уйрăм пахчасене малалла аталантарса пырас; вĕсем усă куракан çĕр лаптăкне, усракан выльăх-чĕрлĕх йышне ӳстерес; тухăçлă тырпул, пахча-çимĕç туса илес задача тăрать. Вăрçă вăхăтĕнчи пиллĕкмĕш ялхуçалăх çулĕнче пирĕн подсобнăй хуçалăхсемпе пахчасенчен рабочисемпе служащисене куллен кирлĕ апат-çимĕçе татах та ытларах туса илмелле.

Малтанласа палăртнă тăрăх, акăнакан çĕр лаптăкне кăçал кашни подсобнăй хуçалăхрах пысăклатмалла, пĕлтĕрхинчен пурĕ 3.889 гектар нумайрах акмалла; мăйракаллă шултăра выльăхсемпе сурăхсен йышне 850 пуç, сыснасемпе чăх-чĕпсен хисепне 2000 пуç ытла ӳстермелле.

Çак пысăк задачăна ăнăçлăн татса парасси, чи малтанах, подсобнăй хуçалăхсем çуракине тĕплĕн хатĕрленсе лайăх иртернинчен килет. Ялхуçалăх ĕçĕнчи чи хĕрӳ те ответлă тапхăр—çураки çывхарса çитет. Республикăри колхозсемпе совхозсем вăрçă вăхăтĕнчи тăваттăмĕш çуракине большевикла хатĕрленеççĕ.

Анчах та промышленность предприятийĕсем çумĕнчи подсобнăй хуçалăхсем пирки çакна калама çук-ха, вĕсем, пĕтĕмĕшпе илсен, çуракине вăраххăн хатĕрленеççĕ. Чылай подсобнăй хуçалăхсенче тырпулпа пахча-çимĕç вăрлăхĕсем çитмеççĕ, вĕсене сортласа тасатма тытăнман. Сăмахран, Челноков юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завод çумĕнчи подсобнăй хуçалăхăн клеверпа вика вăрлăхĕсем чылай çитмеççĕ.

Çуракине хатĕрленес ĕçре вăрлăх тĕп вырăн йышăнса тăрать, ахальтен мар: «Мĕн акатăн—çавна пуçтарса илетĕн» теççĕ. Çитмен вăрлăхсене подсобнăй хуçалăхсен халех тупмалла, вĕсене сортласа тасатса, акма юрăхлă тумалла, вăрлăх фончĕсем мĕнле упраннине тĕрĕслесе тăмалла. Районсемпе хула Совечĕсен исполкомĕсен подсобнăй хуçалăхсене кирлĕ вăрлăха колхозсенчен тупса пама пулăшмалла.

Çавăн пекех удобренисем хатĕрлес, вĕсене çĕр участокĕсем çине кăларас ĕçре те чылай подсобнăй хуçалăхсем тытăнман. Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводри, Çĕмĕрле комбинатĕнчи, Шупашкарти пир-авăр, чăлха фабрикисенчи подсобнăй хуçалăхсем тислĕк турттарас тĕлĕшпе ытла та сӳрĕккĕн ĕçлеççĕ. Хуçалăх руководителĕсен çĕре çемçетмелли вырăнти япаласемпе: тислĕкпе, торфпа, кĕлпе, компостпа ытларах усă курмалла.

Тракторсене, ялхуçалăх машинисемпе инвентарьсене юсас, кадрсем вĕрентсе хатĕрлес ĕçсем те подсобнăй хуçалăхсенче çителĕксĕр пыраççĕ. Çак ĕçсене текех вăраха ямалла мар, вĕсене тума халех тытăнмалла.

Иртнĕ çулта агротехникăна пăхăнса ĕçлемен пирки, хăшпĕр подсобнăй хуçалăхсем туса илнĕ тырпул, пахча-çимĕç тухăçĕ питех те начар пулнă. Тĕслĕхрен, Çĕмĕрле комбиначĕ çумĕнчи подсобнăй хуçалăх гектартан 53 центнер, Шупашкарти чăлха фабрики çумĕнчи хуçалăх—20 центнер çеç çĕрулми туса илнĕ. Подсобнăй хуçалăхсен ĕçĕнчи çак пысăк çитменлĕхе кăçал пĕтерес пулать. Ятарласа кружоксем организацилесе, хуçалăх работникĕсене агротехникăна вĕрентме тытăнмалла, вĕсем ялхуçалăх культурисене хăш вăхăтра тата мĕнле акса, лартса тумаллине тĕплĕн пĕлсе тăччăр. Рабочисемпе служащисем хушшинче ку енĕпе массăллă ăнлантару ĕçне анлăн сарса ямалла. Халĕ, вăрçă вăхăтĕнче, подсобнăй хуçалăхра, коллективлă тата уйрăм пахчасенче апат-çимĕç туса илни рабочисемпе служащисен пурнăçне мĕн таран лайăхлатма пулăшнине вĕсем туйса илччĕр.

Кăçал коллективлă тата уйрăм пахчасенче çĕрулми, купăста, хăяр, помидор тата ытти çимĕçсем туса илесси уйрăмах анлăн сарăлмалла. Çак тĕлĕшпе кашни предприятири, учрежденири профсоюз организацийĕсем çумĕнче пахча-çимĕç ĕçĕпе ĕçлекен комиссисем пулмалла. Çав комиссисен задачи—пахча-çимĕçе ушкăнпа тата харпăрхăй тĕллĕн туса илес ĕçе кашни рабочие, кашни служащие явăçтарасси, вĕсене çĕр лаптăкĕсем çителĕклĕ таран уйăрса парасси пулать. Лайăх çĕр лаптăкĕсене чи малтанах Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене, фронтовиксен çемьисене памалла, вĕсене çĕрулмипе пахча-çимĕç вăрлăхĕсем тупса парса пулăшмалла. Лартмалли çĕрулми вăрлăхĕ çитмен çĕрте унăн тăррине касса хатĕрлемелле. Çуракинче кирлĕ инвентарьсене (кĕреçесем, катмаксем, кĕреплесем, лейкăсем т. ыт. те) малтанах хатĕрлесе хумалла. Рабочисемпе служащисем валли пахча-çимĕç калчисем ӳстерех туса илес тесе, парник хуçалăхне халех хатĕрлеме тытăнас пулать.

Предприятисенчи подсобнăй хуçалăхсене аталантарса пырасси хуçалăх руководителĕсен ĕçĕ çеç мар, партипе совет организацийĕсен задачи те пулса тăрать. ВКП(б) райкомĕсемпе горкомĕсен, районсемпе хула совет исполкомĕсен подсобнăй хуçалăхсене кăçалхи çуракине хатĕрленес ĕçре активлăн пулăшса тăмалла.

Чугун çул валли вăрман хатĕрлемелли плана Куславкка районĕ республикăра пурнинчен малтан тултарчĕ.

Ӳкерчĕк çинче: Буинскри вăрманпромхоз директорĕ Я. Васильев юлташ Куславкка районĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхоз членĕсене: А. Маслова, Е. Павлов, О. Майорова тата К. Лукин юлташсене вăрман хатĕрлемелли плана срокчен тултарнă ятпа саламлать.

С. ФРИД фотоӳкерчĕкĕ.

Вăрман хатĕрлевĕнче малта пыракан район

Кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрлес ĕçре Чурачăк районĕ малта пырать. Вăл вăрман хатĕрлемелли плана касас енĕпе 105 процент, турттарас енĕпе 110 процент тултарнă. Район çак çитĕнĕве фронтовой уйăхлăха активлăн хутшăнса турĕ. Уйăхлăха хутшăнсанах кашни колхоз хăйĕн заданине срокчен тултарма обязательство илнĕ. Чылай колхозсем хăйсен заданийĕсене Хĕрлĕ Çар кунĕччен тултарнă. «Молодая сила», «Заря», «Новая сила», «Камай», «Красное Сормово», «Шумасар» тата Молотов ячĕпе тăракан колхозсем заданирен ирттерсе ĕçлеççĕ.

Вăрманта районри колхозниксем чылайĕшĕ стахановла ĕçлеççĕ. Норма тăрăх вăрман касаканăн сезонра 110 кубометр хатĕрлемелле. «Красный пахарь» колхозран мобилизациленĕ Е. Андреевпа Г. Семенов колхозниксем 140-шер кубометр, Е. Степанова, М. Никифорова, Н. Ильина тата А. Андреева колхозницăсем 125-шер кубометр хатĕрленĕ.

П. Архипова, М. Филиппова, Д. Ефимова колхозницăсем («Красный Восток» колхозран) шахтăсене çирĕплетмелли материалсем тунă çĕрте ĕçленĕ. Вĕсем çав материалсене 64-шар фестметр хатĕрленĕ.

Район ку таранччен тунă çитĕнӳпе лăпланса ларма шутламасть: кăçалхи II-мĕш кварталшăн вăрман хатĕрлесе турттарать.

Хĕрарăмсен Пĕтĕм Тĕнчери Кунĕ ячĕпе Шупашкарта пулса иртнĕ пуху

Мартăн 8-мĕшĕнче Шупашкарта хĕрарăмсен Пĕтĕм Тĕнчери Кунĕ—Мартăн 8-мĕшĕ ячĕпе пуху пулса иртрĕ.

Пуху президиумĕнче: ВКП(б) Обкомĕн секретарĕсем Чарыков, Ахазов, Андреев юлташсем, Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ Андреева юлташ, Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателĕ Матвеев юлташ, ВКП(б) Центральный Комитечĕ çумĕнчи Парти Контроль Комиссийĕн Чăваш республикинчи Уполномоченнăйĕ Логвин юлташ, ВКП(б) Обкомĕн пропаганда енĕпе ĕçлекен секретарĕ Вишняков юлташ, ача амăшĕ-геронинясем Е. Ефимовăпа С. Старостина юлташсем тата хулари паллă хĕрарăмсем.

Пуху, тăвăллăн алă çупса, Сталин юлташа тата ВКП(б) Центральный Комитечĕн Политбюро составне хисеплĕ президиума суйларĕ.

Хĕрарăмсен Пĕтĕм Тĕнчери Кунĕ çинчен ВКП(б) Чăваш Обкомĕн шкулсем енĕпе ĕçлекен отделĕн заведующийĕ Шалфеева юлташ доклад туса пачĕ.

Доклад хыççăн пухура пулнисем пысăк хавхаланупа Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ патне саламлă çыру яма йышăнчĕç.

Юлашкинчен Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ СССР Верховный Совечĕн депутачĕ Андреева юлташ, СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ ячĕпе, нумай ачаллă амăшĕсене орденсемпе медальсем пачĕ. «Ача амăшĕ—геронин» ятлă ордена Çĕрпӳ районĕнчи «Сталинец» колхоз колхозници Евдокия Ефимовна Ефимова тата Комсомольски районри «Пролетарий» колхоз колхозници Степанида Сергеевна Старостина юлташсем илчĕç. Ун хыççăн нумай ача пăхса ӳстернĕшĕн Шупашкар хулинчи 39 хĕрарăма орденсемпе медальсем пачĕç.

Пуху хыççăн çыхăну çуртĕнчи тата пир-авăр фабрикинчи художествăллă пултарулăх коллективĕсем концерт пачĕç тата «Член правительства» ятлă кино-картина кăтартрĕç.

1942 ÇУЛХИ ВОЕННĂЙ ЗАЕМĂН ВЫЛЯВĔ

Мартăн 5-мĕшĕнче Союзсен Çуртĕн Октябрьски залĕнче 1942 çулхи Военнăй заемăн 5-мĕш вылявĕ пулса иртнĕ.

Вылявра 271.565.200 тенкĕлĕх 1.017.750 выигрыш пулнă. (ТАСС).

1944—1945 ÇУЛХИ КĔРКУННЕПЕ ХĔЛЛЕХИ ВĂХĂТРА ВĂРМАН ХАТĔРЛЕМЕЛЛИ ПЛАНА МĔН ЧУХЛЕ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

(Мартăн 5-мĕшĕ тĕлне)

Районсем тата вăрман хатĕрлекен организацисем	Плана тултарнă (процентпа): Турттарас енĕпе	Плана тултарнă (процентпа): Хатĕрлес енĕпе	Мĕнле вырăн йышăнать: Турттарас енĕпе	Мĕнле вырăн йышăнать: Хатĕрлес енĕпе
Чурачăк	105,8	110,6	1	12
Куславкка	103,8	115,9	2	10
Первомайски	103,0	132,4	3	7
Шăхасан	102,1	131,7	4	8
Шупашкар	100,8	135,7	5	6
Чкаловски	100,0	74,5	6	27
Елчĕк	94,9	110,2	7	18
Комсомольски	91,6	101,3	8	16
Советски	91,2	102,1	9	15
Муркаш	90,0	92,2	10	22
Красноармейски	88,2	92,6	11	21
Пăрачкав	83,6	111,3	12	11
Сĕнтĕр	82,0	70,4	13	29
Çĕмĕрле	80,8	189,1	14	1
Сĕнтĕрвăрри	78,1	124,1	15	9
Тăвай	77,4	94,1	16	18
Çĕрпӳ	73,5	93,3	17	19
Вăрнар	73,2	141,1	18	3
Канаш	69,5	91,5	19	23
Вăрмар	66,5	71,8	20	28
Калинино	64,3	139,1	21	4
Шăмăршă	61,5	173,6	22	2
Ишлей	60,8	137,7	23	5
Элĕк	59,9	98,0	24	17
Етĕрне	55,8	84,7	25	25
Йĕпреç	55,7	89,0	26	24
Октябрьски	55,5	84,6	27	26
Хĕрлĕ Чутай	54,0	108,0	28	14
Кувакино	43,2	92,9	29	20
Улатăр	43,2	67,0	30	30
* * *				
Йĕпреç вăрман хуçалăхĕ	107,3	138,7	1	2
Кире вăрман хуçалăхĕ	106,8	111,5	2	6
Вăрнар вăрман хуçалăхĕ	102,2	183,8	3	1
Çĕмĕрле вăрман хуçалăхĕ	93,8	117,6	4	5
Улатăр вăрман хуçалăхĕ	91,0	132,3	5	3
Алтышево вăрманпромхозĕ	89,4	79,2	6	18
Долгополянăри вăрман завочĕ	88,8	126,8	7	4
Йĕпреç участокĕ	85,8	88,9	8	10
Буинск вăрманпромхозĕ	77,1	100,9	9	7
Вăрнар вăрманпромхозĕ	73,7	99,7	10	8
Çĕмĕрлери механизациленĕ вăрман пункчĕ	70,3	84,6	11	15
Канаш вăрманпромхозĕ	70,2	62,1	12	19
Йĕпреç вăрманпромхозĕ	68,2	85,5	13	13
Кирери механизациленĕ вăрман пункчĕ	65,3	90,4	14	9
Хĕрлĕ Чутайри механизациленĕ вăрман пункчĕ	65,0	86,0	15	11
Атăл леш енчи вăрманпромхозĕ	63,9	84,7	16	14
Улатăр вăрманпромхозĕ	56,8	81,8	17	16
Алтышевăри вăрман завочĕ	46,9	81,0	18	17
Шăмăршă вăрманпромхозĕ	44,5	85,8	19	12

ÇĔНТЕРӲШĔН ĔÇЛЕТПĔР

ИШЛЕЙ. (Хамăр корр.). Районри колхозсенче колхозниксен пухăвĕсем пулса иртеççĕ. Вĕсенче СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн «Ялхуçалăхне аталантармалли 1945 çулти план çинчен» йышăннă постановленине сӳтсе яваççĕ.

Сыпайкасси ял Советне кĕрекен «Вускассы» колхозра ял Совет председателĕ В. Смелов юлташ партипе правительствăн çак постановленийĕ калама çук пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен ăнлантарса панă. Ялти учительница П. Шукина юлташ пухури колхозниксемпе колхозницăсене çав постановлени пурнăçлассишĕн мĕнле ĕçлемелли çинчен каланă.

Çавăн пекех «Ыраш», «Клевер» колхозсенче те пухусем пулса иртнĕ. Ататкасси Марка ял Советне кĕрекен «Правда» колхоз членĕсем, СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн постановленине сӳтсе явнă хыççăн, 1000 тонна торф хатĕрленĕ, 91 центнер кĕл, 48 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă.

Совет хĕрарăмĕсем Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешес ĕçре

Хĕрарăмсен Пĕтĕм Тĕнчери Кунне — Мартăн 8-мĕшне Совет Союзĕнчи хĕрарăмсем кăçал Хĕрлĕ Çар, фашистла нимĕç захватчикĕсене çĕмĕрсе пырса, чапăн çĕнтерÿсем тунă вăхăтра палăртса ирттерчĕç.

Хĕрлĕ Çар хамăрăн Тăван çĕршыва гитлерла ирсĕрсенчен пĕтĕмĕшпех тасатса çитерчĕ. Германи ăшне, Берлин патне кĕрсе кайма хăйне валли çул уçрĕ те. халĕ ĕнтĕ хамăр союзниксен çарĕсемпе пĕрле пулса, нимĕçсен фашистла çарĕсене аркатса тăкас ĕçе ăнăçлăн вĕçлесе пырать. «Нимĕçсем тапăнса кĕнине хирĕç пыракан Отечественнăй вăрçăн аслă çапăçăвĕсенче Хĕрлĕ Çар Совет Союзĕнчи халăхсене фашистла нимĕç чуралăхĕнчен çăлса хăварчĕ. хамăрăн Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне хÿтĕлесе хăварчĕ тата Европари халăхсене нимĕç чуралăхне сирсе пăрахма пулăшрĕ» (Сталин).

Совет халăхĕпе унăн Хĕрлĕ Çарĕ Тăван историллĕ çĕнтерĕве совет работницисем, колхозницисем, хĕрарăм-интеллигентсем хăйсен пысăк вăйне хучĕç.

Пирĕн çĕршыври ĕçхĕрарăмĕсем производствăпа ялхуçалăхĕнче фронта тухса кайнă арçынсем вырăнне тăчĕç. Вĕсем çĕнĕ кăткăс профессисем вĕренсе алла илчĕç. Хăйсен ĕçĕсен ăçи-çăйи мастерĕсем пулса тăчĕç. Çĕршыва халăх хуçалăхне малалла аталантарас ĕçре пулăшрĕç, фабрикăсемпе заводсенче, колхозсемпе совхозсенче пĕтĕм ĕçĕн йывăрлăхне хăйсем тÿссе ирттерчĕç.

Чапа тухнă совет артиллерийĕн çĕнтерÿвĕсем хĕçпăшалсемпе боеприпассем хатĕрлекен ĕçхĕрарăмĕсен паттăр ĕçĕпе уйăрăлми çыхăнса тăраççĕ. Хĕрарăм-токарьсен, сверловщицăсен, фрезеровщицăсен, слесарьсен тата аллисем тăшмана вилĕм кÿрекен тупăсен деталĕсене туса хатĕрлеççĕ. Уралти заводсенче Бусыгина, Тетерина, Глазова работницăсем, малта пыракан технологипе усă курса, 1944 çулта планран ирттерсе 300 пиншер снаряд турĕ. Танк промышленноçĕн хăшпĕр заводĕсенчи хĕрарăмсемпе хĕрсен йышĕ пĕтĕм рабочисен хисепĕнчен 70 процент таран шутланать. Вĕсен аллисем нимĕç захватчикĕсене пĕтерсе пыракан, тăшманăн оборонине арката-арката тăкакан хăрушă машинăсем туса кăлараççĕ.

Вăрçă вăхăтĕнче «арçын профессийĕ» текен ăнлану çухалчĕ. Хĕрарăмсем, Тăван çĕршыв хушнă чухне, кирек епле ĕçе те тума пултараççĕ. Уралти горновой Фаина Шарунова вăрçă кунĕсенче домна мастерĕ пулса тăнă, авалтанпах арçын ĕçĕ тесе шутланакан профессие вĕренсе çитнĕ.

Шахтăсенче ĕçлеме хĕрарăмсене çăвăл мар. Анчах çĕршыва пĕтĕм чĕререн пулăшма тăрăшни, тăшмана аркатас ĕçре Хĕрлĕ Çара пулăшма тăрăшни, çине тăрса тата пĕтĕм вăйпа ĕçлени ăнăçу тума май парать. Вăрçă вăхăтĕнче пиншер хĕрарăмсем горняксен тĕп специальноçĕсене вĕренсе алла илнĕ. Донбасри чи лайăх стахановецсен шутĕнче тивĕçлипе малта пыракан хĕрарăм-шахтерсен—Нина Кузьменко тата Мария Гришутина юлташсен ячĕсем тăраççĕ.

Нефть промышленноçĕн пур участокĕсенче те çавăн пекех хĕрарăмсем хăйсен ĕçĕсене лайăх туса пыраççĕ. Вăрçă вăхăтĕнче нефть промышленноçĕнче ĕçлекен 174 хĕрарăма Правительствăн пысăк наградисемпе—орденсемпе тата медальсемпе наградăланă.

Пирĕн хĕрарăм-стахановкăсем ĕç тухăçлăхне пĕрмаях хăпартса пыраççĕ, технологи процесне лайăхлатаççĕ, продукци ытларах туса кăларас тĕлĕшпе хăюллăн çĕнĕ çулсем шыраççĕ, продукцин пахалăхне лайăхлатма тăрăшаççĕ. Çамрăк стахановка Екатерина Барышникова çав тери паллă юхăма — плансене рабочисен сахал йышĕпех тултарас тата ирттерсе тултарас юхăма пуçарса ячĕ. Барышникова çĕннĕ ĕç меслечĕпе анлăн усă курнипе пула, çĕршыври предприятисенче вуншар пин рабочи пушанnă, вĕсене производствăн ытти участокĕсене янă.

Хĕрарăм работницăсем пĕтĕм вăйя хурса ĕçлени Хĕрлĕ Çара хĕçпăшалпа боеприпассем ытларах та ытларах парса тăма пулăшать. Вăрçă вăхăтĕнче чугун çул транспортĕнче те хĕрарăмсем йышăнса тăракан вырăн чылай ÿсрĕ. Хĕрарăм-железнодорожницăсем—машинистсен, станци начальникĕсен, диспетчерсен, кочегарсен профессийĕсене вĕренсе алла илчĕç. Фронтпа халăх хуçалăхĕ валли япаласемпе таварсем турттарас ĕçре уйрăмах палăрнăшăн тата вăрçă вăхăтĕнчи йывăр условисенче чугун çул хуçалăхне юсас ĕçре паллă çитĕнÿсем тунăшăн нумай железнодорожницăсене Совет Союзĕн орденĕсемпе тата медалĕсемпе наградăланă. Калинин чугун çулĕ çинчи старши стрелочницăн Антонина Николаевна Александровăна, Киров чугун çул станцийĕн дежурнăйне Анна Петровна Шарковăна, Белоруссри чугун çулĕ çинчи паровоз машинистне Елена Мироновна Чухнюка Социализмлă Ĕç Геройĕн ятне панă.

Вăрçă умĕн ССР Союзĕнчи предприятисенче 150 пин хĕрарăм инженерсемпе техниксем пулса ĕçленĕ. Хальхи вăхăтра промышленноçăн ертсе пыракан вырăнĕсенче хĕрарăмсем татах та ытларах ĕçлеççĕ. Вĕсем Тăван çĕршыв уменчи хăйсен патриотла тивĕçне кирлĕ пек пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

Тăваттăмĕш çул ĕнтĕ хĕрарăмсем ялхуçалăх ĕçĕсен пĕтĕм йывăрлăхне тÿссе ирттереççĕ. Вăрçа пула килсе тухнă пысăк йывăрлăхсене сирсе пырса, социализмлă ял çарпа хуласенчи халăха—апат-çимĕç промышленноçа чĕртавар ытлăн-çитлĕн парса тăма пултарчĕ пулсан, кунта ĕнтĕ колхозницăсен, совхозсемпе МТС-сенчи работницăсен тава тивĕçлĕ ĕçĕ палăрса тăрать.

Вăрçă кунĕсенче вуншар пин хĕрарăм колхозсене ертсе пыракансем пулса тăчĕç. 1944 çулăн пуçламăшĕ тĕлне республикăсенче, Совет Союзĕнчи крайсемпе облаçсенче 21.656 хĕрарăм колхоз председателĕсем пулса ĕçленĕ. 150 пин колхозница ăйхир, пахча-çимĕç тата сад-пахчи бригадисене, 100 пин ытла хĕрарăм колхозри фермăсене ертсе пыраççĕ. Трактористсемпе шоферсем тата комбайнерсем хушшинче хĕрарăмсен хисепĕ нумай ÿсрĕ. Вăрçăн виçĕ çулĕ хушшинче трактористсемпе механиксем тата комбайнерсем пулма 1.857 пин çынна вĕрентсе хатĕрленĕ. Вĕсенчен пĕр миллион çын ытла хĕрарăмсем. Паллă трактористка Дарья Гармаш ятне пĕтĕм çĕршыв пĕлет. Унăн бригади темиçе çул хушши ĕнтĕ Совет Союзĕнчи чи лайăх трактор бригади ятне тытса тăрать. Иртнĕ çулта Даша Гармаш бригади, кашни трактор па 1.866 гектар сухаласа, 10 тоннăна яхăн горючи перекетлесе хăварма пултарнă.

Колхозницăсем пысăк тухăçлă тырпул туса илессишĕн пыракан кĕрешÿре активлăн хутшăнаççĕ, малта пыракан агрономи наукине пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Вĕсем вăрлăх участокĕсемпе опытлă участоксене пăхса тăраççĕ, пысăк тухăçлă тырпул звенисене ертсе пыраççĕ, ялхуçалăх производствине малалла аталантараççĕ. Мускав облаçĕнчи Руза районĕнчи «Хĕрлĕ Октябрь» колхозри Татьяна Артемьева звени пĕр гектартан 53,4 центнер çурхи тулă туса илнĕ. Мускав облаçĕнчи Коломна районĕнчи «Пятилетка в четыре года» колхозри Тамара Крутова звени кашни гектартан 83,5 тонна çĕрулми туса илнĕ. Совет ялĕнчи ĕçхĕрарăмĕсем социализмлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе аталантарас тĕлĕшпе нумай çитĕнÿсем турĕç. Вĕсем çамрăк выльăхсене упраса хăварас, кашни ĕнерен ытларах сĕт суса илес, выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ÿстерес тĕлĕшпе, çапла вара фронтпа çĕршыва апат-çимĕç ытларах парас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри чи лайăх стахановкăсен ячĕсене нумайĕшĕсем пĕлеççĕ. Мускав облаçĕнчи колхозница Нартова юлташ 11 уйăх хушшинче кашни ĕнерен 4.337-шер килограмм сĕт суса илнĕ, Вологда облаçĕнчи «Буденновец» колхозри сысна фермин заведующийĕ Люскова юлташ 15 уйăх хушшинче пĕр сысна аминчен 128 сысна çурри илсе пăхса çитĕнтернĕ.

Нумай пин колхозницăсем ĕçре çавăн пек пысăк çитĕнÿсем туни вĕсем çĕршыв умĕнчи хăйсен ответлăхне туйса тăнине кăтартса параççĕ. Интеллигенци ĕçĕпе пурăнакан хĕрарăмсем те работницăсемпе колхозницăсенчен юлмаççĕ. Халăх хуçалăхĕн, наукăн, культурăпа искусствăн нумай тĕрлĕ ĕçĕсенче ăнăçлăн ĕçлесе пырса, вĕсем хăйсен вăйĕпе пĕлÿлĕхне фронта вăйлăнрах пулăшнă çĕре, совет государствин çарпа экономика хăватне ÿстерес ĕçе хураççĕ. Нумай хĕрарăмсене искусство тата техникăпа наука ĕçĕсенче ăнăçлăн ĕçлесе пынăшăн Совет Союзĕн орденĕсемпе тата медалĕсемпе наградăланă. Нумайĕшне ученăй степеньсемпе званисем панă. Наукăпа изобретательство ĕçĕсемшĕн Сталинла премин илнисем хушшинче 42 хĕрарăм пур.

Совет правительстви çамрăк ăрăва вĕрентсе воспитани паракан учительсен ĕçне пысăка хурса хакларĕ. 1944 çулта пуçламăш шкулсенче, вăтам шкулсенче, халăха çутта кăларас органсенче ĕçлекен 5.227 çынна орденсемпе тата медальсемпе наградăланă. Вĕсем хушшинче 951 хĕрарăм.

Совет патриоткисем хăйсен Тăван çĕршывне çав тери хĕрÿллĕ юратни нумай тĕрлĕ ĕçре палăрса тăрать.

Совет хĕрарăмĕсем вăрçă вăхăтĕнче ашшĕ-амăшĕсене сухатнă ачасене тимлĕн пăхса ÿстереççĕ. Хĕрлĕ Çарăн аманнă воинĕсене пăхас ĕçе вĕсем пысăк пулăшу параççĕ. Çĕршыва хÿтĕлекенсен пурнăçне уйраса хăварас тесе, пиншер хĕрарăм-донорсем хăйсен юнĕсене параççĕ.

Фашистла нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă районсенчи хĕрарăмсем хăйсене ирĕке кăларакан Хĕрлĕ Çара пулăшассине куллен вăйлатса пыраççĕ. Ирĕке кăларнă хуласемпе ялсене, хуçалăхпа культура учрежденийĕсене юсас ĕçре вĕсем пуçарулăхпа тавçăрулăх кăтартса параççĕ. Черкасова ячĕ Сталинградра кăна мар, ытти çĕрте те паллă ят пулса тăрать. Унăн примерĕпе тăшмантан ирĕке кăларнă нумай хуласемпе ялсенче пиншер бригадăсем ĕçлеççĕ.

Хăйсен пĕтĕм вăйне Тăван çĕршыва хÿтĕлес ĕçе панипе пĕрлех, хĕрарăмсем ача амăшĕн тивĕçлĕхне те чыслăн пурнăçа кĕртеççĕ, çамрăк ăрăва Тăван çĕршыва чĕререн парăнса тăма, ăна юратма, пĕлÿпе ĕçе юратма вĕрентсе ÿстереççĕ. Пирĕн çĕршывра совет воинĕсене ÿстерсе çитĕнтернĕ амăшсене пысăк чыс парсе хисеплесе тăраççĕ. Вăрçă йывăрлăхĕсене пăхмасăрах, партипе правительство хĕрарăмсемшĕн куллен тимлĕн тăрăшаççĕ.

Вăрçă çулĕсенче нумай ачаллă амăшĕсене пособи пама совет государстви 3 миллиард çурă тенкĕ ытла укçа расходланă. Ача-пăча учрежденийĕсен хисепĕ нумай ÿсрĕ, йывăрçын хĕрарăмсене тата ачасене медицина пулăшăвĕ парасси те нумай лайăхланчĕ.

«Ача амăшĕ—героиня» хисеплĕ ята туни, «Ача амăшĕн мухтавĕ» орденне тата «Ача амăшĕн медальне» туни ССР Союзĕнче хĕрарăм ятне татах та çÿлерех çĕклеме пулăшать.

Çĕршыври патриоткăсен шухăшĕсемпе, кăмăлĕсем пĕр тĕллев патнелле туртăнаççĕ, вĕсем нимĕç вăрă-хурахĕсене аркатса такса Берлин çине çĕнтерÿ ялавне çĕклеме Хĕрлĕ Çара вăйлăнрах пулăшас тесе тăрăшаççĕ. Çак аслă тĕллевшĕн вĕсем вăрçăпа çыхăнса тăракан пур йывăрлăхсене те паттăррăн тÿссе ирттереççĕ. Фронта пулăшассине вăйлатсах пыраççĕ. «Тăван çĕршывăн чыслăхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн,—терĕ Сталин юлташ,—совет хĕрарăмĕсемпе çамрăкĕсем ĕç фронтĕнче паттăрлăхпа геройлăх кăтартаççĕ. Вĕсем хамăр Тăван çĕршыва фашистла нимĕç ирсĕрĕсенчен хÿтĕлекен уйăшкисемпе ниччĕшĕсене, ашшĕсемпе ывăлĕсене тивĕçлĕ пулчĕç».

Совет хĕрарăмĕсем Тăван çĕршыва чĕререн парăнса, уншăн тăрăшса ĕçленине тылра çеç мар кăтартса параççĕ. Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче те вĕсем Хĕрлĕ Çарăн воинĕсемпе пĕрле пулса çапăçаççĕ. Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче хăюллăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн Хĕрлĕ Çарăн хĕрарăм-боецĕсемпе офицерĕсене 72.000 çынна ытла орденсемпе тата медальсемпе наградăланă. Вĕсенчен 44 çын Совет Союз Геройĕн аслă ятне илме тивĕçлĕ пулчĕç.

Совет Союз Геройĕн Зоя Космодемьянскаян ячĕ нихăçан сÿнми чыслăхпа ĕмĕр-ĕмĕр çуталса тăрĕ. Отечественнăй аслă вăрçă геройĕсен Лиза Чайкинăн, Ульяна Громовăн, Любовь Шевцовăн тата ытти совет патриоткисен, хăйсен пурнăçне Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн панăскерсен, ячĕсем ялан лăх историе кĕрсе юлчĕç.

Верховный Главнокомандующи приказĕсенче Боршанская гварди майорĕн, хĕрарăмсем вĕçевçĕсем пулса тăракан бомбардировщиксен гварди полкĕн командирĕн ятне пĕрре кăна мар палла тунă. Çав полкри нумай летчицăсем хăйсен паттăрлăхĕпе тата çар мастерлăхĕпе Тăван çĕршыв чапне çÿлерех çĕклерĕç. Вĕсенчен нумайĕшне Совет Союз Геройĕн ятне парса чысланă.

Звено командирĕ кĕçĕн лейтенант Евдокия Носаль 354 боевой вĕçев тунă, тăшман çине 50.000 килограмм бомба пăрахнă. Унăн ĕçне командовани Хĕрлĕ Ялав тата Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕсем парса палăртнă. Вăрçă вăхăтĕнче хĕрарăм-летчиксем хушшинче чи малтан вăл Совет Союз Геройĕн хисеплĕ ятне илме тивĕçлĕ пулчĕ. Совет Союзĕн Геройĕ, эскадрилья командирĕ Смирнова, 800 боевой вĕçев туса, тăшман пуçĕ çине 100 пин килограмм бомба тăкнă.

Совет хĕрарăмĕсен вăй-хăват çăлкуçĕ—совет патриотизмĕ, Тăван çĕршыва чĕререн юратни, большевиксен партине, совет влаçне, Сталин юлташа чуп-чĕререн парăнса тăни пулать.

Совет хĕрарăмĕсем тăшмана хирĕç кĕрешмелли вăя пирĕн социализмлă стройăн никĕсĕнчи тĕреклĕхĕнчен, Совет Союзĕнчи халăхсен аслă туслăхĕнчен илсе тăнă. Совет хĕрарăмĕсен вăйĕ, пĕтĕм совет халăхĕн вăйĕ пекех, вĕсене большевиксен партийĕ ÿстерсе çитĕнтерсе, воспитани панинче пулса тăрать. Пирĕн хĕрарăмсен вăйĕ, вĕсем никам çĕнтерейми Ленин ялавĕ çÿлте тытса, аслă çулпуç геннллĕ полководец Сталин юлташ ертсе пынипе, вăрçăн тĕрĕс те ырă тĕллевĕсемпĕн çапăçнинче пулса тăрать. Çакăнта ĕнтĕ совет хĕрарăмĕсен паттăр ĕçĕн тата халичченхи нихăçан пулман геройлăхĕн çăлкуçĕ.

Вăрçă вĕçленсе пырать. «Нимĕçсене пĕтĕмĕшпех çĕнтересси çывăхра ĕнтĕ,—тет Сталин юлташ,—анчах çĕнтерÿ нихăçан та хăй тĕллĕн пулмасть,—ăна йывăр çапăçусенче тата хĕрÿ ĕçре çĕнтерсе илмелле». Фронт валли—самолетсемпе танксем, снарядсемпе снаряжени, Хĕрлĕ Çарпа çĕршыва çăкăр, апăкакай тата ялхуçалăх çимĕçĕсем татах та ытларах кирлĕ. Пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле совет хĕрарăмĕсем гитлерла тискерсене хăвăртрах аркатса тăкас, нумайранпа кĕтнĕ çĕнтерÿ сехетне çывхартас ĕçре Хĕрлĕ Çара пулăшма мĕн кирлине пурне те туса пама пулаççĕ.

К. КИРСАНОВА.

ЯЛХУÇАЛĂХ СПЕЦИАЛИСЧĔСЕМ ИРĔКЕ КĂЛАРНĂ РАЙОНСЕНЕ КАЯÇÇĔ

Тимирязев ячĕпе тăракан Ялхуçалăх академийĕ ячĕ вĕренсе тухмалли экзаменсем вĕçленеççĕ. Колхозсемпе совхозсене пысăк квалификациллĕ специалистсен — полеводсен, плодоовощеводсен, зоотехниксен, агротехниксен, экономистсен çĕнĕ отрячĕ каять. Вĕренсе тухакансенчен нумайĕшĕ Балтика тавраш не, Белоруссие тата нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă ытти районсене каяççĕ. Çамрăк специалистсен пĕр пайне Казах ССР-не тата Инçетри Хĕвелтухăçне яраççĕ. (ТАСС)

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

СОЮЗНИКСЕН ÇАРĔСЕМ КЕЛЬН ХУЛИНЧЕН КАНТĂРТАРАХРА РЕЙН ШЫВĔ УРЛĂ КАÇНĂ

ЛОНДОН, мартăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ мартăн 7-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă: союзниксем Кельн хулине йышăннă. Кăнтăр енче хулапа пĕрлешсе ларнă ялсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçаççĕ. Союзниксен çарĕсем 18 хулапа ял туртса илнĕ. Вăл шута Кельн хули те кĕрет.

Нейс хулинчен кăнтăралла, Кельн хули патнелле, Рейн шывĕн хĕррине 8 миля тăршшĕ участокра тăшмантан тасатнă. Унта нимĕçсен аллинче Цонс районĕпе Рейн шывĕн çав пунктран çурçĕртерехри кукри кăна тăрса юлнă.

Бонн хули районĕнче тăшман вăйларах хирĕç тăма пуçланă. Союзниксен çарĕсем вăл хулана пырса кĕресси 10 километра яхăн юлнă.

Прюм хули районĕнче союзниксен çарĕсем Прюм хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре Киль шывĕ çине тухнă. Вара тăшман контратакине сирсе янă хыççăн Прюм хулинчен хĕвелтухăç перехре тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре Киль шывĕ урлă каçса кайнă.

Витбург хули районĕнче союзниксен танковăй колонни 40 километр малалла кайнă. Халĕ вĕсем ку вырăнта Рейн шывĕ патне çитесси 32 километр юлнă.

Мартăн 5-мĕшĕнче хĕвеланăç фронтĕнче 6.485 нимĕçе тыткăна илнĕ.

ЛОНДОН, мартăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс тавраш ĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре каланă тăрăх, Америка çарĕсем Итали фронтĕнче паха пунктсем нумай тытса илнĕ. Болоньяпа Пистоя хушшинчи султ ан хĕвеланăçнерехре союзниксен çарĕсем Монте Делла Кроче, Монте Делла Кастельяна, Монте Гранде ди Реано ятлă пунктсене йышăннă. Америка çарĕсен сылтăм флангĕнче тăракан Бразили çарĕсем Кастельнуово хулине тытса илнĕ. 1.000 çынна ытла тыткăна илнĕ.

ЛОНДОН, мартăн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре каланă тăрăх, мартăн 7-мĕшĕнче союзниксен çарĕсем нимĕçсен 34 хулипе ялне йышăннă 6.467 çын тыткăна илнĕ. Ксантен патĕнче Везель шывĕ хĕрринчи укреплениre тăшман вăйлă хирĕç тăрса çапăçать.

Везельпе Кельн хушшинче, Рейн шывĕн хĕвеланăç сыранĕнче, Германи çарĕсене хупăрласа илнĕ районра ларакан Цонс хулине йышăннă. Кельн хулин кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнче тăшман хирĕç тăрса çапăçакан юлашки вырăнсене пĕтересси вĕçленсе пырать. Бон районĕнче халăх пурăнакан икĕ пункта йышăннă. Кобленц секторĕнче союзниксен бронетанковăй чаçĕ Рейн патне çитнĕ. Саар шывĕ районĕнчи укреплени патĕнче нимĕçсем тунă 5 контратакăна сире-сире пăрахнă.

ЛОНДОН, мартăн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс тавраш ĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре каланă тăрăх, Италире 5-мĕш арми чаçĕсем тăшмана Болоньяпа Пистоя хушшинчи шоссе çулĕнчен хĕвеланăçнерехри çÿллĕ вырăнсенчен хĕссе кăларас шутпа виçĕ кун хушши ăнăçлăн атакăланă, хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă, çĕнĕрен йышăннă пунктсем çинче çирĕплenсе ларнă.

Тăшман самолечĕсем Верона хулинчен çурçĕртерехри чугун çул çине бомбăсем пăрахнă.

ЛОНДОН, мартăн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Монтгомери фельдмаршал çарĕсен штабĕ çумĕнчи корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Ходжес генералăн чаçĕсем ĕнер кăнтăрла Кельн хулинчен кăнтăртарахра Рейн шывĕ урлă каçнă. Çак питĕ хăвăрт пулса пыракан наступлени вăхăтĕнче союзниксен çарĕсем тăшмана тапăнма вăйлă укреплени тупнă. Нимĕçсем хирĕç тăмапа пĕрех. Нимĕçсен саклачĕсене тытса илнĕ.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔ ГЕРМАНИЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, мартăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, американецсен 900 бомбардировщикĕ ытла Дортмунд хули районĕнчи виçĕ бензол завочĕпе пĕр нефть тасатакан завода, Билефельд хулинчи пысăк чугун çул виадукне тата Зост хулипе Зиген хулинчи чугун çул узелĕсене тапăннă. Бомбардировщиксене 250 истребитель хÿтĕлесе пынă. Билефельд, Зост тата Зиген хулисем Вăтаçĕрти тата Хĕвелтухăç Германирен Рурти промышленноçлă районсене каякан çулсен пысăк узелĕсем пулса тăраççĕ.

АКАЛЧАНСЕН 1.250 БОМБАРДИРОВЩИКĔ ГЕРМАНИ ÇИЙĔНЧЕ

ЛОНДОН, мартăн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 8-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле акалчансен 1.250 бомбардировщикĕ ытла Дессау хулине, çавăн пекех Гарбургри нефть тасатакан заводсене тапăннă. Çавăн пекех Берлин çине те бомбăсем пăрахнă.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ 15 ÇУЛТИ АЧАСЕНЕ ÇАРА ИЛЕÇÇĔ

ЛОНДОН, мартăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). «Таймс» хаçатăн Стокгольм хулинчи корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 5-мĕшĕнче нимĕçсем 15 çул тултарнă арçын ачасене пурне те Германин яланхи çарне илме пуçланă. Çав 15 çулхи арçын ачасем нумайĕшĕ ĕнтĕ чылай вăхăт хушши çар ĕçне вĕреннĕ, вĕсем хăшпĕр вспомогательнăй чаçсенче тăнă.

ГЕРМАНИРЕ АПАТ-ÇИМĔÇ ÇИТМЕСТ

СТОКГОЛЬМ, мартăн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Гитлерла агентство—Германи информаци бюровĕ апат-çимĕçпе çĕрĕ министрĕн распоряженине пĕлтерет. Çав распоряжени тăрăх, Германин хĕвелтухăçĕнчи ялхуçалăх районĕсене сухатнă пирки, выльăх апачĕпе халăха тăрантарас ĕçре усă курмалла. Распоряженире каланă тăрăх, вак выльăх, кролик, кайăк-кĕшĕк хисепне татах чакармалла.

ОБЩИНАСЕН ПАЛАТИНЧЕ ИДЕН КАЛАНИ

ЛОНДОН, мартăн 7-мĕшĕ. (ТАСС) Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Иден общинăсен палатинче çапла каланă: Германин ют çĕршыв ĕçĕсен министрне Риббентропа тата Германин пропаганда министрне Геббельса Англи правительстви, 1943 çулхи Мускаври конференци Германин тискер ĕçĕсем çинчен йышăннă декларацире каланă тăрăх «вăрçăри тĕп преступниксем» тесе шутлать, тенĕ.

Югослави правительствине туса хуни

БЕЛГРАД, мартăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Регент совечĕ премьер-министр Тито маршал сĕннĕ правительство составне çирĕплетнĕ. Правительствăна çаксем кĕчĕç: премьер-министр тата оборона министрĕ Тито маршал, премьер-министрăн заместителĕ Милан Грол, премьер-министрăн заместителĕ тата учредительнăй собрани пухас ĕçсен министрĕ Эдвард Кардель, ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Иван Шубашич доктор, портфельсĕр министр Иосиф Смодлака доктор тата ыттисем те.

Петр Гроза Румыни правительствин ларăвĕнче тухса калани

БУХАРЕСТ, мартăн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Румынири радио пĕлтернĕ тăрăх, министрсен совечĕн ĕнерхи ларăвĕнче премьер-министр Петр Гроза доктор кĕске сăмах тухса каланă. Хăйĕн сăмахĕнче вăл çĕнĕ правительство умĕнче тăракан тĕп задачăсем çинче чарăнса тăнă. Вăл задачăсем, тенĕ Петр Гроза, çĕршывра йĕркепе хăрушсăрлăх туса хурасси пулса тăраççĕ. Йĕркесĕрлĕхсем пулнă пирки йышăннă мерăсене вĕсем кирлĕ мар пулсанах пăрахăça кăларăпăр, тенĕ вăл.

Правительство программин тĕп задачисенчен пĕри, тенĕ малалла Гроза доктор, çĕр реформине туса ирттересси пулать. Çав реформăна туса ирттерниччен ĕнтĕ ялта йĕрке туса хурасси тата ялхуçалăх çимĕçĕсене ÿстересси килет.

Правительство программине тата спекуляципе кĕрешес, пурнăç хакне йÿнетес тата тавар хакĕсене чакарас задачăсем кĕреççĕ. Пирĕн программа тăрăх, тенĕ малалла Гроза доктор, государство аппаратчĕн пур пайĕсене те тасатмалла. Çав тасатăва хăвăрт тата ăнăçлăн ирттермелле. Правительство вăрçă преступникĕсене наказани памалли мерăсене, çавăн пекех Румынине Германи майлă вăрçа хутшăнтарнăшăн ответлă çынсене пурне те наказани памалли мерăсене пурнăçа кĕртет.

Юлашкинчен, правительство программи тăрăх, полиципе жандармери аппаратне халех урăхлатмалла.

РУМЫНИРИ ХАÇАТСЕМ ÇĔНĔ ПРАВИТЕЛЬСТВО ТУНИНЕ ЫРЛАÇÇĔ

БУХАРЕСТ, мартăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Петр Гроза ертсе пыракан çĕнĕ правительство туса хунине Румыни хаçачĕсем пĕр шухăшлă пулса ырланă. Столицăра тухакан «Универсул» хаçат Гроза декларацине пичетленĕ, çĕнĕ правительство дворецра тупа туни çинчен çырнă, çĕнĕ премьера А. Я. Вышинский юлташ тата Малиновский маршал йышăнни çинчен пĕлтернĕ. Çавăн пекех хаçат Гроза пурнăçĕ çинчен çырса пĕлтернĕ. Гроза йăхĕ 600 çула çити каялла паллă пулнине, 1918—1927 çулсенче вăл парламентăн 6 созывĕнче депутат пулнине, Антонеску диктатури вăхăтĕнче фашистла диктатурăна хирĕç кĕрешнĕшĕн ăна темиçе хут та çар трибуналĕ умне тăратнине палăртнă.

«Тимпул» хаçат, çĕнĕ правительство составĕ çинчен каласа, пăян çапла çырать: «Халăхăн пысăк пайĕ тăвас тенĕ правительство, халăхсен анлă массисем шанса тăракан правительство хальхи вăхăтри йывăрлăха пĕтерме пултарать. Правительство составне пăхсан, унта çĕршыври пур партисемпе политикăллă группировкăсем те пулни курăнать. Хăшпĕр паллă элементсем правительствăна кĕресшĕн пулмарĕç пулсан, айăпĕ уншăн премьер çинче мар. Çĕршывăн демократиллĕ вăйĕсене правительствăна пурне те кĕртес тесе вăл мĕн туma май пуррине пурне те турĕ. Ĕнер пирĕн çĕршывăн конструктивнăй политикăн çĕнĕ тапхăрĕ пуçланнине эпир шанса тăратпăр».

«Халăх массисем,—тесе çырать социал-демократсен партийĕн «Либертатя» хаçачĕ,—августăн 23-мĕшĕ иртнĕ хыççăн çирĕп те ăнăçлă государство политикине тытса пыма ытнăскерсем, халĕ ĕнтĕ тивĕçлипех кăмăллă пулчĕç».

НАЦИОНАЛ-ЦАРАНИСТСЕН ПАРТИЙĔНЧИ ОППОЗИЦИ ПАРТИ ЛИДЕРĔСЕН ФАШИСТЛА ПОЛИТИКИНЕ СИВЛЕТ

БУХАРЕСТ, мартăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Национал-царанистсен партийĕн руководстви фашистла çул тытса пынине пула, хресчен массисем хушшинче партин авторитечĕ нумай чакнă. Çав политика пирки национал-царанистсем хушшинче пысăк хирĕçÿсем тухса кайнă тата чылай организацисем партирен уйăрăлса кайнă. Февралĕн 24-мĕшĕнче хаçатсенче национал-царанистсен партийĕн паллă деятелĕсен ушкăнĕ чĕнÿ пичетлесе кăларнă. Вĕсем, «Пуçару комитечĕ» туса хурса, национал-царанистсен партийĕн реакциллĕ руководствин ĕçĕсене сивленĕ. Вĕсем хăйсем нациллĕ-демократиллĕ фронт çумне хутшăнни çинчен пĕлтернĕ.

«Пуçару комитечĕ» национал-царанистсен партийĕн 9 уездри организацийĕсенче паллă вырăн йышăнса тăрать.

ДОМБРОВА БАССЕЙНĔНЧИ ПРЕДПРИЯТИСЕНЕ ЮСАНИ

ВАРШАВА, мартăн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Польпресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Домброва бассейнĕнче кашни кунах çĕнĕ шахтăсемпе предприятисем ĕçе кайса пыраççĕ. Хальхи вăхăтра унта 14 шахта, 8 металлурги завочĕ, 3 пир-авăр фабрики, хут фабрики, хими завочĕ, 2 цемент завочĕ тата 350 ытла вак предприятисем ĕçлеççĕ.

Маннергейм чирлени

ФИНЛЯНДИ ПРЕЗИДЕНЧĔН ĔÇĔСЕНЕ ПААСИКИВИ ПРЕМЬЕР-МИНИСТР ТУСА ПЫРАТЬ

ХЕЛЬСИНКИ, мартăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Хельсинки хаçачĕсенче çакăн пек пĕлтерÿ пичетлесе кăларнă: «Мартăн 5-мĕшĕнче государство совечĕн ларăвĕнче республика президенчĕн заявленийне вуласа панă. Вăл заявление президент юстици министерстви урлă панă. Заявленире çапла каланă: чирленĕ пирки эпĕ мартăн 5-мĕшĕнчен пуçласа вăхăтлăха президент ĕçĕсене туса пыраймастăп, тенĕ. Государство тытăмĕн формипе çинчен калакан закон тăрăх, президент хăйĕн ĕçĕсене туса пырайман вăхăтра унăн ĕçĕсене премьер-министр туса пымалла».

ЭАМ ГРЕЦИ ПРАВИТЕЛЬСТВИН ПОЛИТИКИНЕ ХИРĔÇ ПРОТЕСТЛЕНИ

ЛОНДОН, мартăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Афины хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, ЭАМ (халăх ирĕклĕхĕн фрончĕ) Греци правительствине вăл февралĕн 12-мĕшĕнче ЭАМ-па тунă килĕшĕве пăхăнмасть тесе айăплать.

Мартăн 6-мĕшĕнче ЭАМ регента, правительствăна тата ют çĕршывсен посолĕсене пысăк çыру янă. Унта вăл суланхай организацисен хаçат-журналĕсене çарма чаракан майсене хирĕç, суд ордерĕсемсĕр арестленине хирĕç тата правительство агенчĕсем чи сылтăмра тăракан организацисемпе пĕрлешсе ĕçленине хирĕç протестленĕ.

Англи посолĕ Липер патне пырсан, ЭАМ представителĕсем çапла каланă: Греци правительстви йышăннă мерăсем демократие хирĕçле полици государствине туса хурас енĕпе пыраççĕ, вĕсем Крымри декларацие хирĕç пыраççĕ, тенĕ.

Мартăн 6-мĕшĕнче каçхине премьер-министр Пластирас генерал либералсен лидерĕ Софулис патне пынă та çапла каланă: Правительство «çĕршыва йĕркепе кĕртес тата государство влаçне туса хурас ĕçе» вĕçленĕ тесе шутлать. Партисем ыйтаççĕ пулсан, правительство вырăнтан тухма хатĕр тенĕ.

Софулис ăна—правительство нумай вăхăт хушши ĕçлесе тăмалла, тенĕ.

ОБЩИНĂСЕН ПАЛАТИНЧЕ ГРЕЦИ ПИРКИ ПАНĂ ЫЙТУСЕМ ÇИНЕ ИДЕН ОТВЕТЛЕНИ

ЛОНДОН, мартăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Иден общинăсен палатинче çапла каланă: Греци правительствинче нумаях пулмасть тунă улшăнусем (государство хăрушсăрлăхĕн суб-секретарьне тепĕр хут туса хуни) Англи правительствипе канашланă хыççăн пулнă, тенĕ.

Иден пĕлтернĕ тăрăх, Англи влаçĕсем Çурçĕр Африкăри 12.000 грек çыннине хупнă. Иден каланă тăрăх, вăл шутран 8.000 çын—тыткăна лекнĕ элассовецсем, Африкăна вĕсене Грецире çапăçнă вăхăтра илсе кайнă. «Çав грексене пурне те,—тенĕ Иден,—каялла тавăрма хатĕрленеççĕ. Пĕр эрне хушшинче Грецие 150 çын тавăрăнмалла». Малалла Иден çапла каланă: Греци правительствин комиссарĕ йĕрлесе пăхнă тăрăх, тыткăна лекнĕ çынсенчен 200 çынна çеç амнисти тивмест, тенĕ. Унтан вăл çапла хушса хунă: Афины çывăхĕнчи икĕ концентрациллĕ лагерьте 5.000 çын пурăнаççĕ, вĕсем хушшинче апат çимесе пăрахнисем пулнă, тенĕ (çав лагерьсем — акăлчансен аллинче).

КОНСУЛЬТАЦИ АССАМБЛЕЙИНЧЕ ФРАНЦИН ШАЛТИ ВĂЙĔСЕН ОФИЦЕРĔСЕМ ÇИНЧЕН ТĂРАКАН ЫЙТĂВА СÿТСЕ-ЯВНИ

ПАРИЖ, мартăн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, консультаци ассамблейинче ĕнер Морис Кригель сĕннĕ резолюцин проектне сÿтсе явнă. Вăл проект тăрăх, Францин шалти хĕçпăшаллă вăйĕсен командирĕсене пурне те Франци çарĕ шутне кĕртмелле.

Хăйĕн проектне хÿтĕлесе, Кригель сăмах тухса каланă. Хăйĕн сăмахĕнче вăл çапла каланă: Германие аркатса тăкас ĕçе Франци ытларах хутшăнтăр тесен, Францин çĕнĕ çарне хăвăрт вăйлатмалла, унăн çумне Францири шалти вăйсен çарĕсене хутшăнтармалла. Кригель палăртнă тăрăх, шалти вăйсен офицерĕсене çĕнĕ çара кĕртмелли çинчен распоряжени пулнă пулин те, вĕсем пирки час-часах чăкăлташнă. Çав вăхăтрах, тенĕ Кригель, Виши çынниснсене паллă вырăнсене лартнă.

Кригель сăмахĕпе чылай ораторсем килĕшнĕ.

Асăннă сăмахсем çине ответ парса, çар министрĕ Дьетельм çапла каланă: манăн политика кам та кам командир пулма пултарать, вĕсене пурне те командир туса хурасси пулать, тенĕ. Вăл çапла хушса хунă: шалти вăйсен хăшпĕр офицерĕсене, запасра тăраканскерсене, çар званийĕсем панă та ĕнтĕ, ыттисене те часах çар званийĕсем парĕç.

Наци оборони комиссийĕн председателĕ Пьер Виллон министр каланипе ырлахманни çинчен пĕлтернĕ. Çар званине панипе-паманнине пăхмасăрах, тенĕ вăл пур ĕçе те шалти вăйсен офицерĕсене чăрмантарасшăн тунă пек курăнать. Францире аслă çар тăвассине хирĕç каварлашу пур тесе шутлама пулать, тенĕ.

Кригель сĕннине ассамблея пĕр саслăн йышăннă.

Республикăри 10-мĕш шахмăт турнирĕ

Республикăри 10-мĕш шахмăт турнирĕн 3-мĕш турĕнче В. Никитин—Журавлева, А. Никитин—И. Никитина çĕнтернĕ. Коноваловпа Студенецкий, Смирновпа Меркулов тата Каменецкипе Афанасьев хăйсен партийĕсене вылясa пĕтереймен.

Тепĕр кунне выляса пĕтермен партисене вылянă. Меркулов—Смирнова, Афанасьев—Безверхние, Студенецкий—В. Никитина çĕнтернĕ. Каменецкипе Никитинăн тата Коноваловпа Студенецкин партийĕсем никам çĕнтерейменнипе вĕçленнĕ.

Тăваттăмĕш турта Студенецкий—А. Никитина, Коновалов—Смирнова çĕнтернĕ. Безверхнипе Каменецкин тата Меркуловпа Журавлевăн партийĕсем никам çĕнтерейменнипе вĕçленнĕ. И. Никитинпа Афанасьев хăйсен партине выляса пĕтереймен.

Тăватă тур хыççăн малта Студенецкий пырать, унăн 3,5 очко, Коноваловăн—2,5 Каменецкипе В. Никитинăн—2-шер очко.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—87, заместителĕн — 0—23, секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31.

НТ 00539 Типографи № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 16.000